

# Вăхăт çĕнĕ ятсем ыйтать

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.
Авторĕсем – Светлана Чикмякова тата Оксана Семенова



## «Шанчăкра»

КАЛАВ



Яндекс.ру сайтран.

Хветĕрпе Хветюç ялта пурăнаççĕ, икĕ ĕне усраççĕ, кайăк-кĕшĕк килкарти тулли. Юлашки çулсенче Хветĕр шăмшакĕ йывăрланнине, ывăннине сисе пуçларĕ – хăшпĕр чух сывлăх çине ўпкелешет арăмĕ умĕнче. Ун пуçне санаторие кайса сипленес шухăш пырса кĕчĕ.

Коммунизм вăхăтĕнче колхозра тарланă чух ăна профсоюз линийĕпе «передовик производства» тесе канма янăччĕ. Çавна аса илсе Хветĕр арăмне сăмах хушрĕ. «Темскер хул-çурăм йывăрланчĕ – унтан-кунтан сурать, курорта кайса массаж тутармалла мар-ши», – тесе мăшăрĕ çине ыйтуллăн пăхрĕ.

– Выльăх-чĕрлĕх патĕнче кашни кун массаж! Курорт валли мĕн чухлĕ укçа кирлĕ, тўлевсĕр пĕр лечени çук, – кăмăлсăрланчĕ арăмĕ.

– Ав, пĕлтĕр леш касри Шишкă Якурĕ «Шанчăк» санаторире пулнă, тем тĕрлĕ массаж турĕç тесе мухтанчĕ, – шухăшне çирĕплетрĕ Хветĕр.

– Тата унта кахал майрасем чылайăн пулĕ-ха. Вĕсемшĕн тунсăхларăн-и? – кĕвĕçўллĕн тинкерчĕ арăмĕ.

Яла килнĕ врач Хветĕре итлесе пăхнă хыççăн: «Шăмшак сурмасть-и, шăнăр туртмасть-и», – тенипе хавасланнă Хветĕр темĕн тĕрлĕ чир тупрĕ. «Çапла, çапла, пилĕк тапранать, ура туртать, хул калакки айĕнчен чикет», – тесе лаплаттарчĕ.

– Апла сире массаж кирлĕ, пилĕк çине вĕри парафин хумалла, лазер-магнит терапийĕ те усăллă пулĕ, – тесе Хветĕре направлени çырса пачĕ.

Хута çавăрса тытнă Хветĕр арăмĕ умне пехлетсе çитрĕ. «Каларăм вĕт сана чир нумай тесе, врач сипленме кайма хут пачĕ», – савăнăçне пытараймарĕ Хветĕр.

– Ара, ярать пулсан кай эппин, выльăх-чĕрлĕхне пăхкалăп, – килĕшрĕ Хветюç.

Укçине çителĕклĕ чикрĕ Хветĕр. Тепĕр кунне чăматанне йăтса хулана тухса вĕçтерчĕ. «Шанчăк» санаторие персе çитрĕ. «Администратор» текенни ăна пўлĕме вырнаçтарчĕ, апат, сиплев вăхăтне пĕлтерчĕ, врач патне ячĕ.

Вун-вуникĕ лечени çыпăçтарчĕ врач – хурт сăхтарни, хуртсем лартни, озон уколĕ, виçĕ тĕрлĕ массаж, лазер-магнит терапийĕ, тинĕс тăварĕпе ларни.

Укол-массажпа хĕремесленнĕ Хветĕр столовăйне çитрĕ. Унта официант апат-çимĕçе сĕтел çине çитерчĕ. Хайхи Хветĕр çумне туя тытнă хĕрарăма лартрĕç. Вырăс иккен, хăй кăмăлсăррине палăртрĕ: «Это не санаторий, а дом престарелых», – тесе хучĕ. Апат çиекен Хветĕр чăнах та ватăрах çынсем ытларах ларнине асăрхарĕ, хăшĕпĕри – туяпа. Майра Хветĕрĕн телефонне ыйтрĕ, хăнана та чĕнсе пăхрĕ, виçĕ хут ун ятне ыйтрĕ. Тĕлĕннĕ Хветĕр пўлĕмне васкарĕ.

Тепĕр кун майра урăх арçынпа ларнине асăрхарĕ Хветĕр. «Вăт кун пек пулчĕ иккен пĕрремĕш паллашу», – кăмăлсăрланчĕ Хветĕр.

«Арăм майрасем пирки тата ăçтан пĕлет-ши?» – шухăшларĕ вăл...

**ЯНСАРИН**

## Çынлăх...

КАЛАВ


Яндекс.ру сайтран.

Иван Андреевич тухтăр хыççăн алăка хупрĕ те арăмĕн пўлĕмне каялла кĕчĕ. Сĕтел патне утса пычĕ, врач хăварнă рецепта тытса вуларĕ.

– Ну, вăт, Лиза, ан пăшăрхан, – терĕ вăл мăшăрне ачашшăн алăран тытса... – Кĕçех, ак, сывалатăн. Эп эмелсем туянма кайса килем-ха. Ан тунсăхла.

Арçын шкафри кивĕ шкатулкăна васкамасăр уçрĕ. Кунта вĕсем нумай çул ĕнтĕ мăшăрĕпе укçа упраççĕ. Анчах хальхинче аллине чикрĕ те... темиçе вак хут укçа кăна тăлăххăн выртать.

«Ах, çитмест... – шухăшласа илчĕ Иван Андреевич. – Ним те мар, кўршĕсем патне кĕрсе тухăп. Кивçен илетĕп, нумаях кирлĕ мар-çке», – лăплантарчĕ вăл хăйне. Площадкăна тухрĕ те кĕçех кўршĕсен шăнкăравне пусрĕ.

– Сывлăх сунатăп, Иван Андреевич, – ăшă кулăпа кĕтсе илчĕ ăна Ирина Владимировна. – Кĕрĕр, кĕрĕр.

– Çук, чăрмантарам мар-ха. Эп мĕн ыйтупа... Эмел туянма укçа çитеймест. Кивçен пулмасть-ши? – вăтанарах ыйтрĕ арçын.

Кўршĕ хĕрарăмĕн питĕнчен йăл кулă тăрук çухалнине сисрĕ вăл.

– Ăнланатăр-и, çавăн пек ларутăру... Эпĕ ывăла çуралнă кунпа çĕнĕ телефон шантарнăччĕ. Туянса памасан, мĕнле-ха? – терĕ.

– Юрать, юрать. Чăнах та. Каçарăр, тархасшăн, – аванмарланчĕ Иван Андреевич.

Кўршĕсен алăкĕ шăпăрттăн хупăнчĕ.

«Тен, Светлана Семеновна патне кĕрсе тухмалла? – пăшăлтатрĕ арçын. – Вăл пулăшаканччĕ».

– Кам унта? – ыйтрĕç алăка уçмасăрах, Иван Андреевич шăнкăравласан.

– Ку эпĕ-ха – сирĕн кўршĕ.

– Итлетĕп, – илтĕнчĕ çаплипех хупă алăкран.

Иван Андреевич арăмĕ валли эмел туянма укçа кирлине ăнлантарма пикенчĕ.

– Эпĕ хирĕç мар. Анчах, пĕлетĕр-и, хĕвел ансан кивçен пани – япăх паллă. Ыран кăнтăрла килĕр, – хуравларĕ кўршĕ хĕрарăмĕ.

Çак сăмахсене илтсен Иван Андреевичăн урисем йывăрланчĕç, аллисем те усăнчĕç, пыра тем капланса килнĕн туйăнчĕ.

«Мĕн тăратăп-ха эпĕ, аптекăра скидкăсем те пулаççĕ вĕт. Тен, хамăн укçах çитĕ», – хăйне хавхалантарма вăй тупрĕ вăл.

– Ку эмелсем çине скидка çук, – пĕрешкелех хурав пулчĕ темиçе аптекăна кĕрсен те.

Иван Андреевичăн чĕри пăчăртаса хĕсĕнчĕ, тухса тарассăн тапма пуçларĕ унăн черетлĕ аптекăн алăкĕсене хупсан. Урамра сивĕ çил туллать, арçыннăн вара вăйсăрлăха туйнипе куçĕсенчен куççуль тумларĕ.

– Эсĕ, мĕн, макăратăн-им? – илтĕнчĕ çил шавĕ витĕр сасă.

Иван Андреевич пуçне сасă еннелле çавăрчĕ. Аптека çурчĕ айăккинче урасăр ыйткалакан ларать иккен. Иртен-çўренсем ун умĕнчи пластик стакана вак укçа е хутлине те пăрахса хăвараççĕ.

– Мăшăрăм манăн йывăр чирлĕ. Эмел кирлĕ. Эпĕ ăна та туянаймастăп – укçа çитмест, – куççульне шăлчĕ Иван Андреевич.

– Арăм... – тўпенелле пăхса калаçрĕ ыйткалакан. – Манăн та пурччĕ мăшăр. Вилчĕ. Халĕ эпĕ – урамра...

Тăрук кивĕ тумтирĕн кĕсйисене ухтарма тытăнчĕ вăл, пĕр чăмăр хуçланчăк хут укçа туртса кăларчĕ.

– Ме, тыт. Сана халĕ кирлĕрех. Мана тата пулăшĕç, – терĕ.

Иван Андреевич тĕлĕннипе сăмах чĕнеймерĕ. Чĕтрекен аллисемпе укçана тытрĕ те хăйĕн çăлăвçине ыталаса илчĕ.

– Юрать, юрать, каях... – терĕ кăна лешĕ.

**Ирина КАЛИНИНА**

**Вениамин СОРОКИН**, Вăрнар

### Уйăхлă каç

Уйăхлă каç. Кăшт уçăрах.
Çўçентерет чуна лăштах.
Кĕтетĕп тусăма вăрах.
Ура сасси. Килет вăлах.
Çутă, уйăхлă сукмак,
Тўпе çăлтăрлă, кăвак.
Мăшăрăн аллийĕ ăшă,
Кăмăлĕпе ытла ытарлă.
Унпа паллашрăмăр хирте.
Йăл кулать хирĕç пăхса.
Шухăшăмпа ĕмĕтсене
Ăна парас терĕм уçса.
Ĕмĕтсем выляççĕ ирĕкре,
Калаймăн пурне те сире.
Уйăх аякран хитре,
Пур-ши пурнăç ирĕкре?
Шухăшсем аякка вĕçеççĕ.
Кăмăллап пурăнма ялта.
Çук пулĕ ĕмĕтĕн вĕçĕ.
Телейĕмĕр, ан çухал таçта.
Вăрманти ял, анлă улăх –
Илемлине курмарăм урăх.
Шухăшăм, ан васка, тăхта,
Ĕмĕтре те эс çўрен кунта.
Кăмăллă утма çарран,
Чечекре улăхри çаран.
Пăх-ха çавранса тавра –
Сап-сарă тулă шăркара.
Унран килмест пуласси.
Манăн чунăмăн ăшши,
Ан пулчĕ эсĕ ун йышши.
Хумхансан та кĕтетĕпех,
Чĕре ыйтать хăйĕннех.
Сисмерĕм те – ыталаса,
Тăрать çумра ачашланса.
Лăпкăн тапаççĕ чĕресем,
Юласшăн мар вĕсем пĕччен.
Ан сўн эс, чунăмри хĕлхем,
Хăть ĕмĕтре вĕçсем ирччен.

### Чĕре

Чĕре ыйтать хăйĕннех,
Шăп ларатăп пĕр-пĕччен.
Чĕре тапать ерипен:
Шухăш пăтранчĕ вăрахчен.
Çўретĕп ачалăхра темччен.
Тўпе кăвак, çăлтăр тулли –
Тытасчĕ пĕрне парне валли.
Йăл-йăл кулаç пĕри, тепри,
Килĕшрĕ мана чи аякри.
Чăтлăхра куккук сасси,

### Тăван енче

Тăван кĕтес – чунăм çĕклемĕ.
Куç умĕнчех, ялан асра.
Çуралнă ял – чĕре илемĕ.
Çирĕп вырнаçнă ăшăмра.
Илемлĕ ял, Яваш теççĕ.
Турă пилленĕ çак çĕре.
Чĕкеçсем çĕр çумĕпе вĕçеççĕ,
Саламласа ырă кунпа пире.
Çырмасем шăнкăртатса юхаççĕ,
Аналла чупаç сут шывĕсем.
Улăхра явăшсем утă çулаççĕ,
Аякка вĕçеççĕ кĕввисем.
Çут шăрçа пек ирхи сывлăм
Йăл-йăл вылять хĕвел çинче.
Манман сана эп, савнă ялăм.
Манмаç мана та ку енче.
Кун çутийĕ тамăлсассăн,
Йăл-йăл кулса уйăх тухсан,
Вăштăр çил вĕрсен ачашшăн
Лăпланчĕ ĕшеннĕ ялăм ман.
Илĕртет çут уйăх каçĕ.
Сăпайлă çăлтăрлă тўпе.
Пур-ши ун хĕррийĕ, вĕçĕ?
Юмахри пек çухалать ирпе.
Ытарайми тăван ман ялăм.
Сан çинчен çыратăп сăвăсем.
Эсĕ манăн пурнăçăм, хавалăм.
Тавах сире, ял-йышăм, тăвансем.

**Зоя БАРАНОВА**, Вăрнар

**Пурнăç кустăрмийĕ малаллах васкать. Ĕмĕрĕ те иртет, малта та çутине курма çук. Иртни те тухман манăçа – тата тепĕр вăрçă. Аттеаннесем тўснĕ нушана, эпир курнине çамрăксен курмаллах ан пултăрччĕ, тесе калаçаттăмăр. Çапла шухăшласа, кулянса çак сăвă çыранчĕ.**

### Шухăш

Шухăш, шухăш тулăх...
Хытăрах хупасчĕ хурлăх хапхине,
Ан тухайтăр хурлăх халăх
хушшине.
Пур этемлĕх куртăр
пурнăç пахине,
Ирĕккĕн савăнтăр чунĕ хушнипе.
Акă хурлăх тухрĕ хапха айĕнчен:
Хăвăрт арпаштарчĕ халăх
пурнăçне,
Чĕрене хускатрĕ хăйĕн шайĕнчен,
Йăлтах улăштарчĕ халăх пурнăçне.
Шăпăр-шăпăр çумăр аслă урамра.
Кўренўллĕ халăх сасăсăр йĕрет...
Халăхăн куççулĕ асран тухас çук.
Шăлсене çыртатпăр,
чулланать чĕре.
Хурлăх çеç пултарĕ уççăн
кăшкăрма.
Шухăш, шухăш тулăх,
çук унран усси,
Пултараймĕ халăх телее чĕнме.
Хурлăх халь пуласшăн
çĕршывăн хуçи.
Вăйлисем пĕрлешĕр
хурлăха çĕнме!
Хытăрах хупасчĕ хурлăх хапхине.

### Ан хăвар...

Ан хăвар эс мана, ан хăвар,
Пĕччен пурăнма çăмăл мар.
Ватăлсан тунсăхлать кашни чун,
Кĕскелет кунсерен ĕмĕр ун.
Мĕнле эс хулара пурăнан?
Пурнăç халь суяпа пĕртăван.
Хĕл иртет, ак, çитет çуркунне.
Çĕр çине йыхăрать çу кунне.
Тунсăха эп ниçта хураймас,
Тунсăха чĕререн кураймас.
Тўпере ярăнаç тăрисем,
Аякран илтĕнеç сассисем.
Манса кайрăм хавас юрлама.
Манса кайрăм кулма, савăнма.
Савнă ывлăм, пĕччен ан хăвар,
Пуш пўртре пурăнма çăмăл мар.
Пўртре мăнуксем чупса çўресен,
Тунсăх тарĕ манран аякка.
Ывлăм, хĕрĕм, мăнуксем,
кĕтетĕп сире эп ялан.

### Тăван ял

Асран кайми ял-йышăмсем,
Ытарайми тăванăмсем,
Кĕтетĕр пуль, юлташăмсем,
Нихçан манми тус-тантăшсем.
Кирек ăçта кайсассăн та,
Тем чул ыр çын курсассăн та,
Чун туртăнать ман сан еннех,
Ялан кунта атте-анне.
Çўренĕ эп шав инçетре,
Эс çăлтăр пек ман чĕрере.
Ĕçсем нумай, ĕçре – сăвап,
Ял-йышăма мухтап, савап.
Асран кайми ман тăван ялăм,
Сана курма ялан хавас.
Паян сана халалласа,
Юрлап юрра эп савăнса.
Ыталатăп сире, тăванăмсем,
Ырлăх-сывлăх сире эп сунатăп.
Чунăмпа эп ялан сирĕнпе.